Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 57 (4626) | *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 22-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

# Акара тар юхтăр, хирте тырă пултăр

## Хăвăртлăх ÿсет, паттăрсем хушăнаççĕ

Хресченсен хуçалăхĕсен "Игенче" ассоциацийĕнчи чĕкĕнтĕр акса ÿстерес тĕлĕшпе чапа тухнă **Нагим Загидуллович ЗАЙНУЛЛИН** пĕр кунра 31 гектар чĕкĕнтĕр акса, смена нормине 248 процент пурнăçланă.

* * *

Хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнчи **Анатолий Михайлович КУЛЬМЕТЬЕВ** сахăр кăшманĕ акнă çĕрте 2,5 норма пурнăçланă.

* * *

Çав хуçалăхри **Геннадий Николаевич ВАСИЛЬЕВ** Т-4 тракторпа пĕр кунра 50 гектар çĕр культиваципе, смена нормине 192 процент тултарнă.

* * *

"Киклĕ" ассоциацири **Рафик Халитович ШАРАПОВ** пĕр кунра 30 гектар кукуруза акнă, смена нормине пурнăçлани 214 процент шутланнă.

* * *

Хресченсен хуçалăхĕсен Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнчи **Дамир Нагимович ЗАГИРОВ** кукуруза акнă çĕрте икĕ норма ытла пурнăçланă.

## Тимлĕх уйăрса тата хисеплесе

Хирти çурхи хĕрÿ ĕç кунĕсенче çĕр ĕçченĕсен кăмăлĕсене çĕклес тесе мĕн тумалла? Паллах, тимлĕх уйăрмалла тата хисеплемелле.

Шăп кăна çак тĕллевпе иртнĕ эрне вĕçĕнче районта йĕркеленĕ агитпоезд çула тухрĕ. Унăн составне "Надежда" патшалăх предприятийĕн парикмахерĕ, чугун çул çинчи ОРС магазинĕ, аптека ĕçченĕсем тата художество пултарулăх ăстаçисем кĕнĕ. Агитпоезд тĕлпулăва хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ" ассоциацийĕнчен пуçларĕ. Çĕр ĕçченĕсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче парикмахерăн - арçынсен мастерĕн Т.Рогожинан услугисемпе усă курас текенсем те тупăнчĕç. Кĕскен каласан, çав услугăсене предприяти шутĕнчен панă вĕт. Чугун çул ОРСĕн магазинĕнче те кирлĕ таварсем сахал мар туянма пулатчĕ. 94-мĕш номерлĕ тĕп аптека ĕçченĕ Э.Вильданова та ял çыннисене тĕрлĕ эмелсем сĕнчĕ.

Пултарулăх артисчĕсем С.Миннеханов, М.Илларионова, Н.Миннеханова ялти ĕçченсене хăйсен юрри-ташшисемпе савăнтарчĕç.

Агитпоезд район тăрăх малалла çÿрет. Вăл Çуткÿл, Ялавăр ялĕсенче пулнă ĕнтĕ. Вырăс тата чăваш ялĕсене агитбригадăн тепĕр ушкăнĕ çÿрет. Агитпоезда пур çĕрте те чăтăмсăррăн кĕтни тата тав туса ăсатса яни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

С.НУРУЛЛИНА.

## ĔÇЛЕСЕН ПУРĂНМА ПУЛАТЬ



Ялти мĕнле ĕç тупăшлăрах пулнине пĕлетĕр-и эсир? Сăмахран, Кивĕ Чаллăра ку ĕç сысна ĕрчетес отрасль. Паллах, тÿрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçлесен. Сăмахран, Алхасовсем пек. Вĕсене чылайăшĕсем ăмсанаççĕ. Упăшкипе арăмĕ Дмитрипе Ольга кунта пурĕ те икĕ çула яхăн кăна вăй хураççĕ-ха. Вĕсем кÿршĕ облаçри Сителлĕ ялĕнчен куçса килнĕ. "Эпир лере укçасăр ĕçленĕ тесен те юрать", - тесе аса илеççĕ вĕсем. Кунта вĕсем виççĕн, Иван Итринпа 40 станок-вырăнлăх вĭтери сыснасене пăхаççĕ, договорпа ĕçлеççĕ. Сысна ами çăвăрланă хыççăн кашни ама пуçне 6-шар çура хуçалăха параççĕ, ытти - хăйсене (хресченсен хуçалăхĕсен "Родина" ассоциацийĕнче сысна пăхакансен ĕçне темиçе çул каярахах çавăн пек меслетпе йĕркеленĕ ĕнтĕ). Çавăн пек туса выльăх пăхакансем пĕрре те йăнăшмаççĕ. Çапла, февраль-март уйăхĕсенче çăвăрланă амасенчен Алхасовсене иккĕшне 29 çура, Иван Итрина 15 çура лекнĕ. Вĕсене сутнă та - акă сана "чĕрĕ" укçа. Алхасовсене хăшĕ-пĕри ăмсанни çинчен эпир каларăмăр ĕнтĕ. Анчах та вĕсен ĕçĕ мĕнле йывăр пулнине пурте тенĕ пекех пĕлмеççĕ çав. Апла пулин те вĕсем ĕç йывăр тесе ÿпкелешме хăнăхман, малашне те фермăрах ĕçлеме, Кивĕ Чаллăра пурăнма шутлаççĕ. Хуçалăх правленийĕ вĕсене çĕнĕ çурт тума пулăшма шутлать, выльăх пăхакансем вара унăн хакне пĕчĕккĕн тÿлесе татĕç. Халь вĕсен вара çĕнĕ шухăш: "Ĕçлесен - пурăнма пулать".

С.ХАЙРУЛЛИНА.

**Ÿкерчĕкре: Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацири сысна пăхакансем Ольгапа Дмитрий Алхасовсемпе Иван Итрин.**

## Катастрофăсен медицини лайăхланĕ

***Районпа хула администрацийĕ "Нурлат районĕн граждан оборонин медицина службин составĕнче катастрофăсен медицина службине 1998-2001 çулсенче лайăхлатасси" тĕллевлĕ программа йышăннă.***

Программа пушă вырăнта пулман тата Федерацин "Халăха тата территорисене çутçанталăк тата техногеннăй майлă чрезвычайлă лару-тăруран хÿтĕлесси çинчен" калакан Законне тата ТР Министрсен Кабинечĕ 1997 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă тивĕçлĕ Постановление пурнăçа кĕртес тĕллевпе ĕçлесе хатĕрленĕ. Тĕрĕс ĕнтĕ, чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухнă тата инкек-синкеке пĕтернĕ чухне чи малтан медицина-санитари службине кирлĕ пулма пултарать. Апла, ресурссем çителĕклĕ кирлĕ. Сăмах май каласан, ТР территорийĕнче вăйлă производство комплексĕсем нумай, вĕсем хăйсен технологийĕсенче хăрушă веществосемпе усă кураççĕ. Районта та хлор тĕлĕшпе хăрушă объектсем шыв тасатакан сооруженисем пулса тăраççĕ, шĕвĕ аммиак тĕлĕшпе - сахăр завочĕ, аш комбиначĕ, шĕвĕ аммиак склачĕ, Нурлатри "Агрохимсервис". Унтах сирпĕнсе вут-кăвар тухассипе хăрушă объектсем чылай. Кусем "Нурлатнефтепродукт" АО, "Нурлатнефть" НГДУ, "Нурлатнефтешырав" ООО подразделенийĕсем, чугун çул станцийĕ тата ыттисем.

Çутçанталăк катастрофисем те пулма пултараççĕ: аслати, çил-тăвăл, ишĕлсе анни, çаплах пысăк инкек кÿреççĕ. Кăçал Краснодар крайĕнче шыв илнине çеç аса илмелле...

Палăртнă тĕллевсене татса пама вырăнти программăпа задачăсен пĕтĕм комплексне пурнăçлассине пăхса хăварнă. Катастрофăсен медицинин районти службине аталантарасси тĕп задача пулса тăрать. Çавăнпа та уйрăм йывăрлăх районти тĕп больница коллективĕ çине тиенет. Паллах, укçа-тенкĕ тăкакланать. Мĕнле çулпа та çÿреме пултаракан санитари транспорчĕ, ку чухнехи хÿтлĕх хатĕрĕсем, медикаментсен тата урансене çыхмалли материалсен запасĕ кирлĕ. Программăна пурнăçа кĕртме пурĕ 250 пин тенкĕ кирлĕ, финанс енчен пулăшассине район бюджечĕ хăй çине илет.

Паллах, инкек-синкек пăрăнса иртсе ĕнтĕ, анчах ăнсăртлăхсене кĕтсе илме хатĕр пулмалла.

Т.АЛЕКСЕЕВА.

## Авиабилетсем 40 тенкĕ хаклăрах

Район администрацийĕн пуçлăхĕн постановленийĕпе районта пурăнакансем Нурлат-Хусан-Нурлат сывлăш линийĕпе вĕçмелли билетсен хакне50 процент чакарнипе икĕ çул усă куртăмăр. Çакă Нурлатра тата районта пурăнакансене чылай усă кÿчĕ: нумай вăхăт хушши эпир унта та кунта питĕ йÿнĕ хакпа вĕçрĕмĕр.., анчах та ялан пылпа çу пулмасть çав. Кăçалхи майăн 18-мĕшĕнчен район тата хула администрацийĕн пуçлăхĕ "бюджета пурнăçлама йывăррипе" хăйĕн постановленине пăрахăçланă тесе çырнă официаллă документра. Халь авиапассажирсен билет хакне пĕтĕмпех тÿлемелле пулать.

## Тивĕçе пурнăçла та таврăн

**Майăн 13-мĕшĕнче Нурлат районĕн призывникĕсен пĕрремĕш команди Хĕçпăшаллă Вăйăсене службăна кайнă.**

Хальхинче вĕсем çиччĕнччĕ - тĕпрен илсен, 1978-1980 çулсенче çуралнисем, пулас салтаксенчен чи "ватти" - институтран вĕренсе тухнăскер, 25 çулхи яш. Офицерсем призывниксене службăн тĕп тивĕçĕсем çинчен аса илтерчĕç тата яшсене тăван кил-çуртне, çемйине ан манччăр, час-часах çырусем яччăр тесе ырă сунчĕç. Практика кăтартнă тăрăх, шăп юлашкипе ытусем сиксе тухаççĕ.

Яшсем Нурлат-Хусан поездпа кайнă, тепрехинче автобуспа ăсатĕç. Пĕр-ик кунран вĕсем пухăну пунктне çитĕç, унтан вара - сывă пул, Тутарстан, аван-и, Ставрополь тăрăхĕ. Ку команда моторизациленĕ чаçсенче служба иртĕ, ыттисене ракета, чикĕ сыхлакансен, шалти çарсене ярĕç.

Районтан çар речĕсене службăна июнь вĕçлениччен 40 çын ăсатĕç.

Т.КОНСТАНТИНОВА.

## Ĕç укçи шучĕпе

"Нурлатнефтешырав" ООО коллективĕ хирти условисенче ĕçлекен пăралуçăсене çĕнĕ системăпа апатлантарассине йĕркеленĕ. Кунне виçĕ хутчен апатланни вĕсене 13-14-шар тенке ларать тата çакăншăн ĕç укçинчен тытса юлни те питĕ меллĕ.

ЮБИЛЕЙ

*Фатых Миниханович Галимова хăйĕн пурнăçĕнче пилĕк çуртра пурăнма тӳр килнĕ, вĕсенчен тăваттăшне хăй тунă, тĕрлĕ специальноçсене вĕренсе тăватă диплом илнĕ, виçĕ хĕр ӳстернĕ, виçĕ туй тунă, халь унăнултă мăнук, юлашкинчен вара Меккăна çулçӳреве кайса килнĕ. Унăн ĕç стажĕ 46 çул шутланать, вĕсенчен 31 çулне вăл партипе патшалăх органĕсенче вăй хунă. Ăна Тутарстан Республикин Хисеп грамотисемпе икĕ хутчен наградăланă. Хăйĕн 47-мĕш ĕçлĕ çуркуннине вăл район администрацийĕн пуçлăхĕн советникĕ пулса кĕтсе илнĕ. Анчах та кабинетра мар, хресченсен хуçалăхĕсен "Урняк" ассоциацийĕн хирĕсенче, унта ăна "комиссар" туса янă.*

# Тăван кил ăшши


Ӳкерчĕкре: Фатых Миниханович Галимов хăйĕн çемйипе пĕрле.

Фатых Миниханович иртнĕ пурнăç çулĕсене аса илет те хăйĕншĕн савăнмалли сăлтав тупатех. Ку чăннипех çапла, вăл туслă та ĕçе юратакан пысăк çемьере çуралса ӳснĕ, унта вунпĕр çын пĕр интереспа пурăннă. Çапла майпа, вăл ачаранах, вĕсен çемйи Оренбург çеçен хирĕсенче çерем çĕрсене çĕкленĕ чухнех ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ, тырпулшăн пысăк яваплăх туйма тата ăна хаклама хăнăхнă. Унтан комсомол ĕçĕ, вĕренӳ çулĕсем... Вăл çав тапхăрсене иртни, пурнăçра пиçĕхсе çитни, тен, каярах район ертӳçин аппаратĕнче 31 çул, вĕсенчен 19-шне вара хытă та çирĕп тытакан, принциплă Г.К.Гиматдинов ертсе пынипе ĕçлеме те пулăшнă. Аппарат ĕçĕ вара пăхма кăна ансат пек, анчах вăл çирĕп кăмăллă пулма, кирлĕ пулсан хытă ыйтма пĕлме, хăш-пĕр чухне вара хăвăн шухăшна шута илмесĕр, ыттисеннипе килĕшме те хистет. Çав çулсем хушшинче ĕмĕрлĕхе асра юлнă çивĕч самантсем, кĕтмен çĕртен сиксе тухнă лару-тăру сахал мар пулнă ĕнтĕ. Фатых Миниханович вара яланах кĕске те мĕнпур вăйхала пама хистекен: "Кирлĕ!" сăмаха тарăн ăнланнипе палăрса тăнă. Халăх хушшинче, ĕç коллективĕсенче идеологи, воспитани ĕçне иртерессинче вăл яланах çак критерие тĕпе хунă, çаплах яваплă участокра - кадрсем суйласа илессинче, вĕсене вырнаçтарассинче йăнăшсем туман, вĕсен пултарулăхне тата майĕсене курма тата тĕрĕс хаклама пĕлнĕ. Пултарулăх вара "аппаратчикăн" чи хаклă пахалăхĕ!

Çав вăхăтрах Фатых Миниханович пысăк çемье пуçлăхĕ пулса тăрать. Тĕплĕ, мĕнпур енчен телейлĕ çемье вучахĕ - унăн чи пысăк мăнкăмăллăхĕ. Килне вăл мĕнле кăмăлпа пырсан та, ăна унта сĕтел çине вĕри апат хатĕрлесе кĕтеççĕ, унăн кăткăс ĕç ыйтăвĕсене ăнланаççĕ. Мăшăрĕпе Сания ханумпа вĕсем виçĕ хĕр ӳстернĕ, вĕрентсе кăларнă, качча парса хитре туйсем тунă. Сайра-хутра пулин те, Галимовсен çемйи тăван килĕнче пĕрле пуçтарăнсан, 14 çын пухăнать! Сывлăхлă ачисем, мăнукĕсем килĕштерсе пурăнни вара аслисемшĕн чи пысăк телей.

Фатых Минихановичшăн тăван кил пĕлтерĕшĕ стенасем çеç мар, питĕ пысăк. Кил, çемье уншăн яланах хаклă пулнă, унта ăруран ăрăва куçакан ырă хутшăнусем йĕркеленеççĕ. Çакă ăна ашшĕпе амăшĕнчен - Минихан пиччепе Сакина аппан пурнăç принципĕсенчен куçнă пулĕ. Çемьери йăла-йĕркене пăхăнса пынинче Фатых Миниханович çуртĕнче хăйĕн юлашки кунĕсем таран пурăннă Сабита аппан, унăн кĕллисен тӳпи пысăк.

Вăл паян наставник пек пурнăç çулĕ уçнă воспитанникĕсемпе, хăйĕн çемйипе мăнкăмăлланать, çемьери, тăвансем хушшинчи хутшăнусене уйрăмах пысăк хак парать. Хăйĕн 60 çулхи юбилей кунĕсенче вăл черетлĕ датăсемпе событисем умĕн вăхăтлăха кăна çăмăллăн сывласа янине чунĕпе туять. Ку дата хыççăн ыттисем пулаççĕ, пурнăç малалла шăвать. Фатых Миниханович, Сирĕн малашнехи пурнăçăрта çирĕп сывлăх, телей ялан пулччăр. Юбилей ячĕпе Сире!

С.НУРУЛЛИНА.

Ача-пăча площадкисем, ау!

# Юлашки эрне пырать

**Кăçалхи çуркунне ăшăпа савăнтармасть пулин те, çутçанталăкри чĕрĕ чун хĕвел, çутă енне туртăнать, шăрăх çуллана кĕтет, вăй пухса çирĕпленес, канас тет. Çак вăхăта уйрăмах ачасем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Эпир вара, аслисем, çуллана, ачасен каникулне кĕтсе илме хатĕр-и?**

**Çак ыйту çине хуравлас тĕллевпе эпир, рейд бригадин составĕ, хулари ача-пăча площадкисен шайне тĕрĕслес терĕмĕр.**

Хулари микрорайонсенче пуринче те пулса курнă хыççăн, ача-пăча площадки валли уйăрнă пĕр вырăнта пулин курас шанăçа çухатнăскерсем, пĕр çурт картишĕнче шăпах ачасем вылямалли площадка тăвакан рабочисене тĕл пултăмăр. Г.К.Гиматдинов урамĕнчи 81-82-мĕш номерлĕ çĕнĕ çуртсем çывăхĕнче РСУри Рафаэль Сайфутдиновăн бригади ĕçлетчĕ. Тимĕр пăрăхсене çулăм çиппипе çыхăнтаратчĕç, юпасем лартатчĕç, чуччусем вырнаçтаратчĕç, тикĕс кавир пек хăйăр тăкнăччĕ, хатĕр сооруженисене вара тӳрех лакпа витетчĕç. Кăмăллă ачасем аслисен ĕçне питĕ интересленсе сăнарĕç.

Кăрмăш микрорайонĕнче вара (халăхра "Гондурас" тесе ят панăскерте) картишсем промышленность базисен территорийĕсене аса илтеретчĕç: кунта (ĕç кунĕн чи хĕрӳ сехечĕсем пынине пăхмасăр) тĕрлĕ маркăллă транспорт ларатчĕ, ачасем вылямалли меллĕ вырăнсене гражданысен "куçми пурлăхĕ" - туса пĕтернĕ тата пĕтермен гаражсем, хăмасем, пĕренесем, чулсемпе тимĕр купи йышăннă. Картишĕнче акнă йăрансем тăрăх та транспорт каçса кайнă. Проектпа кунта чечексем, симĕс курăк, йывăçсем ӳстермелле пулнă пуль те-ха? Çак йĕркесĕрлĕхе эпир Дружба урамĕнчи 74-78-мĕш номерлĕ çуртсен территорийĕсенче те куртăмăр.

Микрорайонăн чи малтанах тунă çурчĕсен умĕнче те çавăн пекехчĕ, "вĕсемпе пĕр çулхи" чуччусем курăнатчĕç ĕнтĕ. Анчах та çавăн пек çĕмĕрсе пĕтернĕ, илемсĕр тимĕр конструкцисем çывăхне камăн пырас килтĕр. Вĕсене кавирсемпе палассем типĕтме ятарласа вырнаçтарнă тесе шутлатăн вара.

Пĕчĕк çемьесем пурăнма тунă çуртра мĕн чухлĕ ача ӳсет. Суту-илӳсен точкисем валли вара, паллах ĕнтĕ, вырăн тупăннă, ачасене валли вара, транспортран хăрамасăр пĕр шухăшсăр хăйсен вăхăтне иртерме вырăн çук.

Сахăр завочĕн, чугун çул, СПТУ, поликлиника микрорайонĕсенче те çавăн пек лару-тăру.





Хула варринче те! Советская урамĕнче вырнаçнă 104-106 номерсемлĕ çуртсен картишĕсене пăхса çаврăннă май эпир кунта пурăнакансене пĕр ыйту патăмăр: "Сирĕн ачăрсем ăçта выляççĕ?" "Камăн кăмăл пур, лере хăйăр çинче,"- сарайсен енне кăтартса хуравларĕ пĕри. Çак, ишĕлсе анма тытăннă ("усă курмастпăр, алăксене уçсан ишĕлсе анма пултарать") хуралтăсем умĕнче кĕпе-йĕм типĕтме пăяв çакнă, ун айĕнчи хăйăр çинче вара мăнтăр хĕрлĕ чăх хĕвелпе ăшăнса ларатчĕ, ун умĕнче мăнкăмăллăн автан çӳретчĕ. "Ачасем тетĕр-и? Вĕренекеннисем шкулта-ха. Анчах та тепĕр эрнерен картишĕнче нимĕн ĕçлеме аптраса çӳрĕç ĕнтĕ". Çапла, ашшĕ-амăшĕсемшĕн канăçсăр кунсем пуçланаççĕ. Ачасем чăх чĕппisем мар вĕт, вĕсене апат тата икĕ витре хăйăр сапса пани кăна çителĕксĕр.

"Подъездра ан шавла, чӳрече çывăхĕнче мечĕкпе ан выля, ан сик, унта ан кай", илтĕнет пур енчен те. Аслисем хушшинче ăслă ертӳçĕсем, "Ачасем пирĕн малашлăх! Вĕсен сывлăхĕ, ăсĕ, ыркăмăллăхĕ чи малтан пире кирлĕ" текеннисем , тупăнĕç-ши? Ача-пăча площадкине тăваси, шкул тăвассиех мар ĕнтĕ, анчах та ку ĕç те вăй хумасăр пулмасть. Вăхăт вара васкатать: юлашки эрне пырать!

**Рейда хутшăннă:**

**Г.АГЛИУЛЛИНА - районти вĕрентӳ пайĕн класс тулашĕнчи ĕçсем тĕлĕшпе ĕçлекен методист,**

**Г.ЮНУСОВА - ЦГСЭН çула çитмен ачасен гигиени тĕлĕшпе ĕçлекен врачĕ,**

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА - хаçат ĕçченĕ.**

# Çумăр, аслати пулĕ-ши...

***Мелиораци пĕлтерĕшне - шăварса тата типĕтсе çĕр пулăхлăхне лайăхлатассине сынсем тахçанах пĕлеççĕ. Юлашки 40 çул хушшинче çĕр чăмăрĕ çинче шăваракан çĕрсен лаптăкĕ 2,6 хут ÿсрĕ. 1993 çулта Голландире çĕре типĕтес тата шăварас ыйту тĕлĕшпе иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конгресс çапла пĕтĕмлетÿ тунă:***

***"XXI ĕмĕрте тăпра ирригацийĕ аталанакан çĕршывсенче ял хуçалăхне ăнăçлă аталантарнин тата апат-çимĕç программине пурнăçланин пĕртен-пĕр виçи пулса тăрать".***

***Тутарстан типĕ зона кĕрет, çавăнпа та часчасах уяр çанталăк пулать. Юлашки 100 çул хушшинче 38-шĕ типĕ пулнă. Тутарстан Республикин гидрометеорологи центрĕн даннăйĕсем тăрăх, уяр çанталăк кашни виçĕ çулта пĕрре пулать. Апла пулсан, пирĕн республикăра, çаплах пирĕн районта мелиораци ĕçĕсене пысăк тимлĕх уйăрмалла. Чăннипех вара ĕçсем мĕнле пыраççĕ-ха? Ку ыйтăва эпир хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне Ю.В.Терентьева патăмăр, хуравĕ вара лăплантараканнисех пулмарĕ. Унăн сăмахĕсем тĕрĕс пулнине эпир Нурлатри шăваракан тата типĕтекен системăсене ĕçлеттерекен управленире (НУЭООС) пулса хамăр куртăмăр.***

Пирĕн районта шăваракан çĕрсем пурĕ 5185 гектар йышăнаççĕ. 20-25 çул каярах ку лаптăксенчи çарансем, акнă хирсем уяр çанталăкра нÿрĕк çитменнипе аптрамастчĕç. Ун чухне политика та урăхчĕ, ĕçе те тĕплĕн пурнăçлатчĕç.

Халь вара мĕнле-ха? Шăп çав çулсенче хуçалăхсене шăваракан системăпа централизациленĕ майпа тивĕçтеретчĕç.

Хальхи вăхăтра мелиораци ыйтăвĕ хăйĕн ĕлĕкхи актуаллăхне çухатрĕ, çакна НУЭООСри лару-тăру тата хуçалăхсенчи шăваракан установкăсем питĕ япăх шайра пулни те çирĕплетет. Шăваракан тата типĕтекен системăсене ĕçлеттерекен управлени Нурлатра 1985 çулта çеç йĕркеленнĕ. Çав вăхăтра коллективра 70 çын вăй хунă. Ĕçлекенсен шутне кура техпарк та ÿснĕ. Анчах çакăн пек кĕске вăхăтра та управленире 6 ертÿçĕ улшăннă. Юлашки çулсенче коллектив куç умĕнчех саланма тытăннă: хальхи вăхăтра кунта ĕçлекенсем 14 çын çеç шутланаççĕ (4-ИТР, 10 рабочи). 5 единица техника пур - 2 трактор, пĕр ГАЗ-53 тата икĕ çăмăл машина. Хăй управлени вара пĕр гектар ытларах çĕр йышăнать. Малтанхи пек хресченсен хуçалăхĕсемпе тачă çыхăнса, договор тăрăх ĕçлесси хут çинче çеç юлнă, халь вара вĕсем пысăках мар услугăсем кăна параççĕ. Тĕслĕхрен, хресченсен хуçалăхĕсен "Татарстан", "Заветы Ильича" ассоциацийĕсенче çĕклекен механизмсене улăштарнă, "Правда", "Восход" хуçалăхсенче те çак ĕçех пурнăçлаççĕ. Кирлĕ пулсан хуçалăха газоэлектросварщик, слесарь, электрик яраççĕ. Районти хуçалăхсем пурнăçланă ĕçсемшĕн НУЭООСпа 1992 çултан тытăнса расчет туман. Чи пысăк парăмçă - улма-çырла питомникĕ, унăн парăмĕ 276 пин тенкĕ шутланать, пурĕ вара НУЭООСа 464 пин тенкĕ тÿлемелле. Çак суммăн çуррине учреждени хăйĕн кредит парăмĕсене тÿлемелле. НУЭООС пăхăнса тăракан республика бюджетĕнчен 1997 çултанпа пĕр пус та уйăрман, парасса та шантармаççĕ. Паллах, ĕç укçине те рабочисем темиçе уйăх курман ĕнтĕ, парсассăн та ăна пайăн-пайăн, ял хуçалăх продукчĕсемпе (хуçалăх çапла майпа тÿленĕ пулсан) тÿлеççĕ. Чĕрĕ укçа вара, НУЭООС начальникĕ К.Галимов каланă тăрăх, машинăсем валли бензин туянма та çук.

Хуçалăхсенчи шăваракан установкăсем çинчен каласан, вĕсене тахçантанпах çĕнетмен. Çирĕп хуçа алли пулман хуçалăхсенче вара вĕсем пачах çухалса пĕтнĕ, сыхланса юлнисем те кивĕ. 17 насус станцийĕнчен хальхи вăхăт тĕлне 6-шĕ çеç ĕçлет, шăваракан 10 установка пур - 2 фрегат, ыттисем - ДКШ-64 тата "Волжанкăсем". Хальхи вăхăтра шăвармалли 5 пин гектар ытла лаптăкран 1893-шне çеç шăвараççĕ. Участоксене шăварассин пĕлтерĕшне "Рассвет", Хафизов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче çеç ăнланаççĕ пулĕ, кунта малтан та çак ĕçе çирĕп тĕрĕслесе тăнă, çавăнпа та шăваракан çĕрсен пысăк пайĕ çак хуçалăхсене тивет. Дизель топливипе ĕçлекен тепĕр "Волжанка" хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче ĕçлет, вăрласа пĕтернĕ детальсенчен пуçтарнисемпе Кислев ялĕнче, "Родина" ассоциацире шăвараççĕ. Киклĕ ялĕнче иртнĕ çул пысăк йывăрлăхпа пуçтарнă "Волжанка" пăрăхĕсем тăрăх шыв пачах та юхман, мĕншĕн тесен установка йăлтах çаратса пĕтернĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен "Тан", "Элмет", "Сĕнче" ассоциацийĕсенче те çакăн пек лару-тăру. Хăш-пĕр хуçалăхсен ертÿçисем çанталăка шанса мелиораци çине алă сулнă вăхăтра пуçарулларах хисем ют пурлăха хăвăрт пуçтарнă: агрегатсенчен тĕслĕ металсене - пăхăр, алюмини - сÿтсе илнĕ. Тĕслĕхрен, "Сĕнчере" "Волжанкăран" пĕр каç хушшинче ураписем çеç тăрса юлнă. "Элметре" пĕтĕм пăхăр кабельсене çаратса пĕтернĕ, çавăнпа та 4 фрегат ĕçсĕр тăраççĕ (кусем юлашки вăхăтра палăртнă фактсем çеç-ха).

Çакăн пек чухне НУЭООС мĕнле мерăсем йышăнать-ха? Управлени представителĕсем вăрланă тĕслĕх пулнă хуçалăха каяççĕ, акт çыраççĕ те кирлĕ çынсем алă пуснă хыççăн ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн Гостехнадзор инспекцине параççĕ. Ыттине вара юлашкисем йышăнаççĕ.

Халь ака хĕрсе пынă вăхăтра мелиораци ыйтăвĕсене тимлĕх уйăрма хуçалăх ертÿçисен вăхăт çук. Ку вĕсен хуравĕ. Типĕ çанталăк кăна ан пултăрччĕ ĕнтĕ.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

---

**Ака-98**

# Тĕрĕслев вăхăчĕ

Хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн (малтан "Россия" пулнă) çĕр ĕçĕнче пĕр вăхăтра йĕркеленĕ подряд звенисем районĕпе чапа тухнă. Мандрейкинсем, Перепелкинсем хăйсем чăн-чăн хуçасем пулнине кăтартнă, вĕсем хăйсен участокĕсенче пуян тухăç ÿстерес тесе вăйĕсене шеллемесĕр кашни агромероприятие вăхăтлă пурнăçлама тăрăшнă, малашнехи çинчен шухăшласа пурăннă. Халь, районта кооператив юхăмĕ анлă сарăлсан, эпир малтанхи опытлă звеньевойсем çаннисене таврăрса ĕçе тытăнĕç тесе шутларăмăр. Виçĕ кооператив йĕркеленĕ пулин те , "малтанхи" ертÿçĕсенчен пĕр А.В.Перепелкин кăна юлнă, ыттисем - А.И.Корчуковпа П.И.Волков - çĕннисем. Ака тĕлне вĕсем пурте пĕрешкел хатĕрленнĕ пек, анчах та хирти ĕçсен хăвăртлăхĕнче звеносенчи ĕçе тĕрлĕрен йĕркелени палăрнă.

- А.И.Корчуков ертсе пыракан кооператив хирте уйрăмах тăрăшса вăй хурать. Вăл ирхи культурăсене акса пĕтернĕ ĕнтĕ, халь акнă анасене апатлантарма удобрени турттарать, - тет хуçалăхăн тĕп агрономĕ Н.Мусин.

- Çакна вĕсем ĕçе икĕ сменăпа йĕркеленипе, çуламалли-сĕрмелли материалсемпе, апат-çимĕçпе вырăнсенчех тивĕçтернипе, кашни минутпа тухăçлă усă курнипе тума пултарнă. Кĕскен каласан, хуçалăхра хирти ĕçсене, тĕпрен илсен, лайăх йĕркеленĕ, акмалли технологие сыхласа хăварассине тивĕçтереççĕ. Имçамланă вăрлăх кăна акаççĕ, çав вăхăтрах пĕр гектар пуçне 1,2-шер центнер шутран удобрени кĕртеççĕ, ĕç хăвăртлăхне те чакарас мар тесе тăрăшаççĕ. Паллах, юлашки çĕр ĕлкĕрнинчен килет, ку тĕлĕшпе вара вĕсем сахал мар йывăрлăхсем тÿссе ирттернĕ. Анчах та мĕнпур çитменлĕхсене ун çине йăвантарсан тĕрĕс пулмĕ. Шел пулин те, кăçал техника час-часах ванать. Кунти техника паркĕ кивĕ, тракторсене ĕçлеме юрăхлă тăвасси çулсерен кăткăсланать. Çавăнпа пĕрлех тата, март уйăхĕнче тĕп инженер Ю.Синдряков ĕçрен кайнă. Паллах, япăхнă инженери службине юсав ĕçĕсем пынă вăхăтра та палăрмасăр пултарайман. Ăмăртакан - Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхпа пĕр-пĕрне тĕрĕсленĕ вăхăтра кÿршĕсем техникăна чылай лайăхрах хатĕрленине вĕсем хăйсем килĕшмесĕ пултарайман. Çакна хирти ĕçсем те çирĕплетнĕ. Кузнецовсем пĕр хутчен кăна мар йывăр лару-тăрăва лекнĕ, хăш-пĕр кунсенче хирте пĕр харăс виçĕ трактор çĕмĕрĕлни те пулнă. Çапла, Марковăн звенинче икĕ ДТ-75 трактора пухса пĕтернĕ кăна, вĕсен моторĕсем каллех шаканă та халь юсавра. П.Волковăн кооперативĕнчи пĕр трактор сÿреленĕ çĕрте икĕ кун ĕçленĕ те каллех юрăхран тухнă, В.П.Краснов тракторист ăна кĕске вăхăт хушшинче ĕçе юрăхлă тăвасса шантармасть. Механизаторсем хăйсем те питĕ пăшăрханаççĕ. Анчах та юсав ĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаншăн вĕсене çеç айăпламалла мар, çукран пур тăвайман вĕт. Хуçалăхра инженери службине çирĕплетес тĕлĕшпе çивĕч ыйту тухса тăнă. Хуçа çуккине техника питĕ хăвăрт "туять". Сăмахран, Вырăс Менчинчи юсав мастерскойне илер, кунта хуçа пурри пĕрре те сисĕнмест: пур çĕрте те тимĕр-тăмăр, çĕмĕрĕлнĕ техника, площадка тирпейлемен.

Тен, хирти çурхи ĕçсем хĕрсе пынă вăхăтра критиклени вырăнлах та мар пулĕ. Юсав вăхăчĕ иртнĕ, иртнине, каялла çаврăймастăн вĕт, анчах та малта çу. Телее, вĕсен шефĕсем - НУРБ ĕçченĕсем тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ. Хуçалăхра нефтяниксен пулăшăвĕпе пурте кăмăллă. Çапла, управленирен ял ĕçченĕсене ака вăхăтĕнче пулăшма икĕ Т-100, пĕр К-700, МТЗ-80, шăратса çыпăçтармалли пĕр агрегат тата 14 çын килнĕ. Çаплах шефсем çуламалли-сĕрмелли материалсем, запас пайсем тупма пулăшаççĕ. НУРБ экскаваторщикĕ Виктор Фадеев ДТ-75 трактора юсать, вăл Вырăс Менчи ялĕнчи мастерскойра икĕ сезон юсавсăр ларнă. Паллах, район ертÿçи ака вăхăтĕнче ял ĕçченĕсене хулари предприятисемпе организацисене пулăшма хушни ял çыннисемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Кăçал хуçалăха Мазитовăн анлă илекен культиваторĕ те питĕ кирлĕ пулнă. Анчах та, хăть мĕнле пулсан та тыр-пул ÿстерессинчи тĕп йывăрлăх çĕр ĕçченĕсем çине тиенет тата яланах çапла пулĕ. Çĕнĕрен йĕркеленнĕ кооперативсен ертÿçисен малтанхи чапа каялла таврăсса, Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăх хирĕсенче пурте ăмсанмалла тухăç çитĕнессе шанас килет.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

---

## ХИСЕПЕ ТИВĔÇЛИСЕМ



**Хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче Николай Сафронович Леваков пек ĕçчен механизаторсем уйрăм шутра, шăпах вĕсене акма шанаççĕ. Кăçал та акă Николай Сафронович акма пĕрремĕшĕ пулса тытăннă. Унăн çумĕнче пулăшаканĕсем - сеяльщиксем. Вĕсем пĕр комплекс составĕнче килĕштерсе, туслăн вăй хураççĕ, чи малтан пахалăха тимлĕх уйăраççĕ. Кăçал хирте виçĕ Леваков ĕçлеççĕ. Акана Николай Сафроновичăн аслă пиччĕшĕ Виталий тата унăн ывăлĕ Сергей хутшăнаççĕ.**

**Ÿкерчĕксенче: Н.С.Леваков; Н.Молотов, В.Иванов, Р.Маланьин сеяльщиксем; удобрени тиекен А.Чернов, вăрлăх турттаракан Н.Васильев шофер тата удобрени турттаракан В.Григорян.**



Н.АЗИЗОВ сăнÿкерчĕкĕсем.



# Дератизаци

Ĕлĕк-авалтанах этем питĕ нумай апат-çимĕç пĕтерекен кăшлакан чĕрчунсене хирĕç кĕрешет.

Йĕкехÿресем, шăшисем тата ытти кăшлакан чĕрчунсем инфекци чирĕсем (вар-хырăм тифĕ, холера, ГЛПС, лептоспироз тата ытти те) ертнипе те сиенлĕ. Вĕсем тĕрлĕ япалана пăсаççĕ, проводсен изоляцийĕсене кăшлаççĕ, çакна май замыкани пулать, телефон тата телеграф çыхăнăвĕсене йĕркеллĕ ĕçлеме чарма пултараççĕ. Кăшлакан чĕрчунсем тырпула кăна мар, пахчаçимĕçе, кăшман хирĕсене те пĕтереççĕ, çаплах çаран, вăрмансене сиенлеççĕ, уйрăмах вĕсем çамрăк йывăçсене кăшлаççĕ, йывăç вара часах типсе ларать.

Кăшлакан чĕрчунсене хирĕç кĕрешме сыхланмаллисем тата пĕтермелли мероприятисем ĕçлесе хатĕрленĕ. Сыхланмаллисем санитарипе гигиена тата санитарипе техника мероприятийĕсенчен тăраççĕ. Пĕррремĕшĕсем - пурăнакан çуртсене, складсене, суту-илÿ çурчĕсене, çаплах вĕсен таврашĕнчи территорие тасалăхра тытасси, апат-çимĕç продукчĕсене кăшлакан чĕрчунсем кĕреймен вырăнта упрасси. Санитарипе техника мероприятийĕсем кăшлакан чĕрчунсене объектсене кĕме чараççĕ, çавăнпа та кирпĕч тата бетон никĕсне 70 сантиметр тарăнăшне хумалла. Кунсăр пуçне, никĕссен вентиляци шăтăкĕсене тимĕр сеткăпа хупламалла.

Кăшлакан чĕрчунсене пĕтермелли мероприятисем - хими тата механика меслечĕсем. Хими меслечĕ - кăшлакан чĕрчунсене наркăмăшланă çимĕç парса пĕтерни.

Механика меслечĕ - капкăнсемпе, сĕкесемпе усă курса тытни. Йĕкехÿресем хăйсем хăнăхман е çĕнĕ япаласене шанмаççĕ. Çавăнпа та госсанэпиднадзор центрĕн лабораторийĕнче туяннă илĕртекен наркăмăшлă япалана париччен малтан вĕсене 2-3 кун хушши ахаль çимĕç памалла, çакăн хыççăн тин наркăмăшлине лартмалла. Капкăнсене те темиçе кун хушши ахаль çеç лартмалла, хĕвелçаврăнăш çăвĕпе йĕпетнĕ çăкăр хытти хумалла. Илĕртекен наркăмăшлă япаласене çинĕ хыççăн вĕсем 5-8 кунран вилеççĕ. Наркăмăшлă çимĕçе асăрханса хумалла, ĕçе вĕçлесен алăсене лайăх çумалла. Вилнĕ чĕрчунсене çунтарса яиалла е çĕре 0,5 литр тарăнăш чавса чикмелле. Имçамсемпе наркăмăшланас пулсан, тÿрех врач патне каймалла. Кун пек чухне кăмăл пăтранать, этем хăсать, сывлăш пÿлĕнет, ĕçес килет, вар-хырăм хирĕçет, кăкăр хĕртет.

Врач киличченхи пĕрремĕш пулăшу - 6-10 стакан ăшă шыв ĕçмелле, хăсмалла. Çакна темиçе хутчен тумалла;

- глаубер тăварне икĕ стакан шывра ирĕлтерсе ĕçмелле;

- çăра пылак чей ĕçмелле.

1997 çулта районта ГЛПСпа чирленисен 22 тĕслĕхне палăртнă, 1996 çулта вара 3 çеç пулнă. Чирленисенчен 68 проценчĕ - ялта пурăнакансем, чирлекенсен 91 проценчĕ - арçынсем. Пĕлтĕр çак инфекци Мĕслĕм районĕнче анлă сарăлнă, 30 ялта мĕнпурĕ 106 çын чирленĕ.

Хула çыннисем хăйсен çĕр участокĕсене ĕçлесе хатĕрлемелли вăхăт çитет. ГЛПСпа чирлесрен сыхланма малтанах участокри çурта тасатса тухма сĕнетпĕр. Урайне, мĕнпур кĕтессене пĕр витре шыва 100-200 грамм хлорамин хушса çума юрать. Йĕкехÿре е шăши пуррине асăрхасан, çуртра дератизаци туса ирттермелле.

Садри çурта хĕллене вырăн тавраш хăварнă пулсан, вĕсене хĕвел çинче лайăх типĕтмелле, 4 сийлĕ марля маскипе усă курса тусана шаккамалла.

**Е.ЕПИФАНОВ,**
**ЦГСЭНри дезинфекци пайĕн заведующийĕ.**

# ПĔЛТЕРŸСЕМ

***Çуна çинчи дача çурчĕ сутăнать. Икĕ пÿлĕмлĕ хваттере икĕ пĕр пÿлĕмлисемпе е пĕр пÿлĕмлипе хушса тÿлесе улăштаратпăр. Телефон: 4-62-19.***

* * *

***Гараж хапхи сутатпăр. Телефон: 5-16-23.***

* * *

***Якаелĕнче хуралтăсем сутăнаççĕ. Телефон: 5-17-93.***

* * *

***Лаптак шифер сутăнать, хаклă мар. Вăтам Хăмăшлăра Бочкаревсенчен ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***ВАЗ-2106, усă курнă прихожăй васкавлă сутăнаççĕ, хаклă мар. Телефон: 5-26-04.***

* * *

***Нурлат хулинче приватизациленĕ пĕр пÿлĕмлĕ хваттере (33 тăваткал метр) Ульяновск хулинчи çавăн пек хваттерпе улăштаратпăр е сутатпăр. Адрес: Ульяновск хули, Ефремов урамĕ, 27-51, телефон: 64-12-61.***

* * *

***Хваттер тара илетпĕр. Телефон: 2-31-44.***

* * *

***6х4 тата 3,5х3,5 метрлă пура сутатпăр. Телефон: 4-13-35.***

* * *

***Чугун çул поселокĕнче кивĕ çурт сутăнать, хаклă мар. Адрес: Советская урамĕ, 139-5, 19 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-2121, çуна çинчи гараж сутатпăр. Телефон: 5-25-88.***

* * *

***Пурăнмалли хваттере е çурта еткере илес тĕллевпе çамрăк çемье вată çынна опекунлăха илет. Телефон: 2-31-44.***

* * *

***Лайăх шайри ВАЗ-21011 сутăнать. Адрес: Маслозаводская урамĕ, 1-3.***

* * *

***Яланах суту-илÿре: кухня гарнитурĕсем (Польша-Германи), хаклă мар. Телефон: 5-22-20, каçпа шăнкăравламалла. Лицензи Б-97 004778.***

* * *

***1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутăнать. Телефон:5-16-64.***

* * *

***Тасатакан сооруженисем çывăхĕнче гараж, апат-çимĕç комбиначĕ хыçĕнче дача, вĕллесем сутатпăр. Телефон: 5-39-55.***

* * *

***5х5 метрлă пура сутатпăр. Адрес: Советская урамĕ, 193-7, 17 сехет хыççăн шăнкăравласа пĕлмелле.***

* * *

***Çĕнĕ, шурă тĕслĕ "Ока" автомобиль сутатпăр. Укçана куçарса тÿлеме те пулать. Телефон: 2-15-89.***

* * *

***Çĕнĕ "Стинол" холодильник (упаковкăсăр), çуна çинчи дача çурчĕ сутатпăр. Телефон: 2-28-30.***

* * *

***Хура металл, оцинковка сутатпăр. Куйбышев урамĕнчи чугун çул ĕçченĕсен клубĕнчи "Абсолют" магазинта е 2-15-89 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле. Лицензи Б-97245629.***

* * *

***Пахчаçăсен "Локомотив" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Телефон: 2-18-40.***

* * *

***ВАЗ-2109 сутăнать. Адрес: Школьная урамĕ, 33-15, телефон: 2-12-54.***

* * *

***Çурçĕр микрорайонĕнче никĕслĕ тата строительство материалĕсемлĕ участока хваттерпе улăштаратпăр. Телефон: 5-13-31.***

* * *

***1988 çулта туса кăларнă ВАЗ-2107 сутатпăр. Адрес: Шашин урамĕ, 27-26, телефон: 5-17-55, 16 сехет хыççăн шăнкăравламалла.***

* * *

***"Татнефтепром" ОАОн Зузеевăри нефть промыслинче УПТ-32 А-50 подъемникпа ĕçлеме 5-6 разрядлă машинист кирлĕ. Ĕç укçи 2100-2300 тенкĕ.***

*ФОТОКОНКУРС

## Çут тĕнчене - объектив витĕр

***Çамрăксен пайĕ "Пирĕн пĕчĕк туссем" темăпа çамрăк фотографсен конкурсне ирттерни çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Акă тинех унăн çĕнтерÿçи тата фотоаппарат хуçи палăрчĕ. Вăл Вăтам Хăмăшлăри 8-мĕш класра вĕренекен Александр Яманов пулчĕ. Вулакансене унăн ĕçĕпе паллаштаратпăр - "Анне килте пулсан мĕнле лайăх" ятлă сăнÿкерчĕкĕ тата çырăвĕ. Çаплах Хуралтăвĕнчи Владимир Белоглазовпа Нурлатри Ирина Михайлова та кăсăк сăнÿкерчĕксем ярса панă. Çĕнтерÿçĕсене малашне те ăнăçлăхсем сунатпăр.***



"Аван-и, сирĕн пата Вăтам Хăмăшлă ялĕнчи 8-мĕш класра вĕренекен Саша Яманов çырать. Пирĕн фотоаппарат çук, пленкине туянтăмăр, аппаратне вара юлташсенчен илтĕмĕр. Пирĕн çемьере пысăк савăнăç - пирĕн лаша хăмларĕ, унăн халь пĕчĕк тихи пур. Вăл, питĕ пĕчĕккĕ те алла вĕреннĕскер, пирĕнпе вылясшăн, алăран сахăр çиме хăтланать. Эпĕ тата манăн Сережапа Алеша шăллăмсем ăна питĕ юрататпăр тата пăхатпăр. Унăн амăшĕ Майка ятлă, ашшĕ - Факт. Атте каланă тăрăх, Факт районта тата республикăра иртнĕ ăмăртусен çĕнтерÿçи. Тихана эпир Миф тесе чĕнетпĕр, унăн ашшĕпе амăшĕн ячĕсен малтанхи саспаллийĕсемпе. Чăнах та, питĕ илемлĕ ят вĕт? Эпĕ выльăх-чĕрлĕхе тата пурнăçри кăсăк самантсене ÿкерсе илме юрататăп".

## Вут-кăвартан сыхланар

Дача çурчĕсенче, пахчаçăсен юлташлăхĕсенче тата граждансем массăлла каннă вырăнсенче пулнă пушарсен статистики, çак объектсенче оперативлă лару-тăру йывăр пулнине кăтартать.

Тĕп сăлтавĕ граждансем пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнманни пулса тăрать.

Тутарстан Республикин "Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен" Законĕн требованийĕсене пурнăçлама тата пушарсен шутне чакарас тĕллевпе Нурлат районĕн пушара хирĕç кĕрешекен Патшалăх службин шалти ĕçсен хула тата район органĕсен службисемпе пĕрле пахчаçăсен юлташлăхĕсенче, лагерьсенче, кану базисенче пушара хирĕç мероприятисене комплекслă ĕçлесе ирттерме 1998 çулхи май уйăхĕнче уйăхлăх ирттерме сĕнет. Çапла туma милицин участок инспекторĕсен инспекторсен составне тата ДПО членĕсене явăçтармалла. Вут-кăвартан пĕрле сыхланмалла!

**А.АЮПОВ,**
**Нурлатри ПЧ ИГПН аслă инспекторĕ, шалти служба капитанĕ.**


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.